27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
23
ШАМАТКУН
250(6745) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетари...

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Юр тытса хӑварни — вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешни

Пирӗн республикӑра кӑҫал гектартан ҫӗршер пӑт е ытларах та тӗштырӑ туса илнӗ колхозсем, бригадӑсемпе звеносем ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз 617 гектар ҫӗр ҫинчен кашни гектартан вӑтам шутпа 134-шар пӑт тӗштырӑ пухса илнӗ. Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз кашни гектартан вӑтам шутпа 17,7 центнер, Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхоз 16,1 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Ҫакӑн пек колхозсем татах та нумай илсе кӑтартма пулать.

Вӑйлӑ тырпул туса илекен колхозсем тырӑ тухӑҫлӑхӗшӗн тырра акнӑ тата ӑна пӑхса ҫитӗнтернӗ вӑхӑтра кӑна мар, тырра акиччен ех кӗрешме тытӑнаҫҫӗ. Агротехникӑллӑ ытти мероприятисемпе пӗрлех, вӗсем юр тытас тӗлӗшпе те тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхозри 3-мӗш бригада (бригадирӗ А. Яковлева юлташ) иртнӗ ҫул ыраш акнӑ 35 гектар ҫӗр ҫине пӗтӗмпех юр тытса хӑварнӑ, ҫапла вара ҫак бригада кашни гектартан 25,1 центнер ыраш пухса илнӗ. Октябрьски районӗнчи «Коминтерн» колхозра М. Петрова юлташ бригади юр тытнӑ вырӑнта кашни гектартан 21 центнер ыраш пухса илнӗ, юр тытман вырӑнсенче 16-шар центнер илнӗ.

Кӑҫал кӗркунне уяр пулнӑ май ҫӗрте нӳрлӗх сахал юлчӗ. Ҫӗрте нӳрлӗх ытларах пултӑр тесен, юр тытса хӑварни кирлӗ. Ҫӗрте нӳрлӗх ытларах пулсан, тырпулшӑн ҫуркунне пулакан уяр ҫанталӑк та хӑрушӑ мар. Анчах та хирте юр тытса хӑварнин усси ҫакӑнта кӑна мар. Вӑл кӗрхи тырӑсене тата уйрӑмӑнах сивве чӑтайман клевера сыхласа хӑвармалли чи пахи май пулса тӑрать. Иртнӗ ҫул Шӑмӑршӑ районӗнче кӗрхи тырӑсен 14,7 проценчӗ, Комсомольски районӗнче 13,6 процент, Хӗрлӗ Чутай районӗнче 12,9 процент шӑнса пӗтнӗ. Хӗрлӗ Чутай районӗнче шӑннипе кӑна клевер 471 гектар, Ҫӗмӗрле районӗнче 242 гектар пӗтнӗ. Кӑҫал хӗл сивӗ те ҫиллӗ пулма пултарать. Тырӑ шӑнса пӗтес хӑрушлӑх та ӳсет. Ҫак тӗслӗхсем вӗсем кашни колхозрах юр тытмалли плана пӗр пӑрахланмасӑр пурнӑҫлама кирлине ҫинчен калаҫҫӗ.

Хӗллехи вӑйлӑ ҫилсем юра ытларах айлӑм вырӑнсене хӑналаса тултараҫҫӗ, унта вара юр ытла та хулӑм пулнипе вӑл ҫуркунне час ирӗлсе пӗтмест, ун айӗнчи тырӑ ҫӗрсе пӗтме пултарать. Юр уйра пур тӗлте те тикӗс выртсан, ҫак хӑрушлӑх та пулмасть.

Юр тытса хӑварнин усси пысӑк, вӑл кирлӗ те паха мероприяти. Ҫак паха мероприятие кашни колхозрах туса ирттерме пулать. Кашни колхозрах ӗҫ вӑйӗ те, юр тытма кирлӗ материалсем те ҫителӗклӗ. Юр тытас ӗҫре пур тӗрлӗ майсемпе те усӑ курмалла. Ягарласа хамӑрӑн, ҫапӑсенчен, улӑмран тунӑ щитсемпе, ыраш тата хӑмӑш кӗлтисемпе йывӑҫ турачӗсемпе тата ытти майсемпе те юр тытма пулать.

Республикӑра малта пыракан колхозсем юр тытас ӗҫе пуҫӑннӑ та ӗнтӗ. Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 61 гектар, Крупская ячӗпе тӑракан колхоз 57 гектар ҫинче юр тытнӑ. Калинино районӗнчи «Алмаз» колхоз юр тытас шутпа 200 щит ытла хире кӑларса лартнӑ. Куславкка районӗнчи «Красная Чувашия» колхоз 60 гектар ҫинче юр тытнӑ.

Анчах ҫакӑн пек тӗслӗхсем республикӑра сахалтарах-ха. Чылай колхозсенче ҫак агротехникӑллӑ паха мероприятие вӑхӑтра пурнӑҫлассишӗн кӗрешмеҫҫӗ. Уйрӑм районсенче юр тытмалли щитсене ҫухатса пӗтернӗ. Куславкка районӗнчи «Восток», «Большевик», «Путь Ленина», Энгельс тата Карл Маркс ячӗсемпе тӑракан колхозсенче юр тытмалли щитсене пӗтӗмпех ҫунтарса янӑ. Ҫавна пула ҫак колхозсем паянхи кун тӗлне пӗр гектар та юр тытман.

Ҫакӑн пек тӗслӗхсем Тӑвай, Хӗрлӗ Чутай, Первомайски, Шӑмӑршӑ тата ытти районсенче те пур.

Чкаловски, Первомайски, Шӑмӑршӑ, Йӗпреҫ, Хӗрлӗ Чутай тата ытти хӑшпӗр районсен руководителӗсем: пирӗн колхозсем—вӑрмансем хушшинче, ахаль те юр нумай пулать,—тесе калама пӑхаҫҫӗ. Ҫакӑ пачах та тӗрӗс мар. Юр тытса хӑварсан, вӑл пур тӗлте те тикӗс выртать, ҫакӑ вара тырпула сыхласа хӑварма пулӑшать. Ҫавӑнпа та кашни колхоз, кашни бригада хӑйӗн ҫӗр лаптӑкӗ ҫине пӗр тикӗс юр тытса хӑварас тесе, халех ҫине тӑрсах ӗҫлемелле, ҫав паха мероприятие пурнӑҫлама колхозниксене мобилизацилемелле.

Тӳрех каламалла, районсенчи ҫӗрӗҫ органӗсем кӑна мар, Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ те юр тытас тӗлӗшпе кирлӗ пек ӗҫлени ҫук-ха. Кунта уйрӑм специалистсем юр тытас ӗҫе хакламасӑр тӑраҫҫӗ.

Юр тытас ӗҫе, паллах, пӗлсе, плана тӑрӑх туса пымалла. Щитсене е юр тытмалли япаласене чӑн малтанах юр сахал ларакан сӑртлӑ вырӑнсене лартмалла. Юр ҫителӗклӗ ларнӑ вырӑнтан щитсене тепӗр ҫӗре куҫармалла, пур тӗлте те юра пӗр тикӗс тытса хӑварассишӗн кӗрешмелле.

Колхоз бригадирӗсем, участокри агрономсемпе пӗрле, ӑҫта мӗнле майсемпе юр тытмаллине малтанах палӑртмалла. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхозра ҫапла тӑваҫҫӗ те. Колхоз агрономӗ Дмитриев юлташ, бригадирсемпе тата колхозри опытлӑ колхозниксемпе пӗрле, уя тухса миҫе гектар ҫине юр тытмаллине, ӑҫта, мӗнле майпа тытмаллине тӗплӗн палӑртса план тунӑ. Кунта пурӗ 200 гектар ҫине юр тытма пӑхнӑ. 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 120 гектар, февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне тата 80 гектар тытма пӑхнӑ. Юр ларман вырӑнсене юр турттарассине, уйрӑм вырӑнсенче юра ҫухалассине, щитсемпе тата ытти майсемпе тытмаллине тӗплӗн сӳтсе явнӑ. Ҫак плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Малта пыракан колхозсен примерӗпе ытти колхозсен те юр тытас ӗҫе халех организацилемелле. Юр тытса хӑварас тесе пур майсемпе те усӑ курмалла.

Колхозсен уйхирӗсенче юр ытларах тытса хӑварассишӗн кӗрешни — агротехникӑллӑ паха ӗҫсенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе халех тата ҫине тӑрса туса пымалла.

Ӳкерчӗк ҫинче: пирӗн чаплӑ земляк—Совет Союзӗн Геройӗ Иван Васильевич Индряков. Вӑл Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Хӗрлӗ Ҫыр ялӗнче ҫуралса ӳснӗ.

Фронтри художниксен ӗҫӗсене кӑтартакан пӗррешмӗ выставка

Белоруссири 3-мӗш фронтӑн политуправленийӗ фронтри художниксен выставкине организациленӗ. Вӑл выставкӑна 49 художник хутшӑннӑ. Нумайӗшӗ вӗсенчен—Смоленск облаҫне, Белоруссие, Балтика тӑрӑхӗнчи ҫӗрсене ирӗке кӑларассишӗн хастарлӑн ҫапӑҫнӑ красноармеецсем. Ҫӗнтерӳ ҫулӗпе вӗсем Мускав патӗнчен пуҫласа Хӗвелтухӑҫ Прусси патне ҫитиччене кайнӑ. Ҫак ҫула вӗсем нумай картинӑсенче кӑтартса панӑ.

Выставкӑра мӗн пурӗ 1.430 ӳкерчӗк пулнӑ. Унта тӗрлӗ формӑсем—живопиҫ, ӳкерчӗк, гравюра тата тӗрлӗ жанрсем—портрет композици, пейсаж, агитплакат, карикатура пулнӑ. Вӗсем Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фронтри художниксем творчество тӗлӗшпе ӳссе ҫитӗннине кӑтартса параҫҫӗ.

Пуринчен ытла гварди старши сержанчӗн Кудрявцевӑн, Катковпа Сидорин красноармеецсен, Таханов сержантӑн, Медведев капитанӑн, Казаков кӗҫӗн лейтенантӑн тата ушкӑнлӑ портретсем тума ӑста Комашкӑн ӳкерчӗкӗсем интереслӗ.

Фронтри художниксем пирӗн чаҫсем тӑшман ҫӗрӗ ҫинче ӑнӑҫлӑ вӑрҫнине кӑтартакан картинӑсем нумай хатӗрленӗ.

Выставкӑра пулнӑ художниксене пухса семинар ирттернӗ. Фронтри художниксен иккӗмӗш выставкине тӑвас тӗлӗшпе пурнӑҫламалли ӗҫсене палӑртса хунӑ. Иккӗмӗш выставка «Мускавран Хӗвелтухӑҫ Пруссие ҫитиччен» темӑпа пулмалла.

Белоруссири 3-мӗш фронтри художниксен выставкин жюри членӗ
Д. ТАТЬЯНИН майор.

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш ФРОНТ, декабрӗн 21-мӗшӗ. (ТАСС).

ҪӖНӖ МУНЧА

Муркаш районӗнчи Янӑмри Тельман ячӗпе тӑракан колхозра колхозниксем валли пӗрлешӳллӗ мунча туса пӗтернӗ.

Шупашкар хула Совечӗн сессийӗ

Ҫак кунсенче Шупашкар хула Совечӗн 28-мӗш сессийӗ пулса иртрӗ.

Сесси хулара суту-илӳ ӗҫӗ тата столовӑйсенче апатланас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен сӳтсе-яврӗ. Ҫак ыйтупа доклад тӑвакан, хула Совечӗн исполкомӗн председатель заместителӗ Киселев юлташ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Шупашкар хулинче суту-илӳ организацийӗсен хисепӗ ӳсни ҫинчен, ҫулталӑкри таварҫаврӑнӑш планне 11 уйӑх хушшинче 97 процент тултарни ҫинчен. Чебторг, Спецторг тата Ҫыхӑну конторипе Атӑл леш енчи торф кӑларакан предприятин ОРС-ӗсем ҫулталӑкри плана срокчен тултарни ҫинчен каласа панӑ.

Анчах та суту-илӳ организацийӗсем вырӑнта тунӑ куллен кирлӗ таварсемпе ҫителӗксӗр сут тӑваҫҫӗ. Сӑмахран, Чебторг куллен кирлӗ таварсем пӗтӗм сутнӑ таварсен хисепӗнчен 4,7 процент чухлӗ ҫеҫ сутнӑ. Чебторг вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗ ӑпӑлинчи майсемпе сахал усӑ курать.

Ҫакӑрпа сут тӑвас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Суту-илӳ организацийӗсенчи хӑшпӗр работниксем ӗҫ ҫине бюрократла пӑхнипе пула, чылай коллективсене ҫӑкӑр тӑратас ӗҫре чӑрмавсем пулнӑ. Магазинсене ҫӑкӑр турттарас ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелемен. Ҫӑкӑр пӗҫерекен комбинат суту-илӳ организацийӗсене ҫӑкӑра вӗрилле парать, ҫапла вара нормӑпа пӑхнӑ чухлӗ парса пымасть.

Ачасемпе медицина учрежденийӗсене тата йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене, ҫавӑн пекех тата ача амӑшӗсене продуктсем парса тӑрас ӗҫе Чебторга хушнӑ. Анчах та ҫав ӗҫе пурнӑҫлас тӗлӗшпе Чебторг ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫлет-ха, ача учрежденийӗсемпе медицина учрежденийӗсене продуктсем ҫителӗклӗ тата вӑхӑтра парса тӑмасть.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче столовӑйсен йышӗ те чылай ӳсрӗ. Хӑшпӗр столовӑйсене, сӑмахран, 4-мӗш номерлӗ столовӑя (директорӗ Меламед) тата ача столовӑйне (директорӗ Орлова) РСФСР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ тав турӗ. Анчах столовӑйсен ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем нумай-ха. Столовӑйсенче тасалӑх ҫителӗксӗр, хӑшпӗр столовӑйсенче (Ялхуҫалӑх институтӗнчи, парти курсӗнчи, Водосветри тата ыттисенчи столовӑйсенче) продуктсем норма чухлӗ паманнисем пулнӑ.

Хулари ОРС-сем кӑҫал хӑйсем валли продуктсем ҫителӗклӗ таранах хатӗрленӗ. Ҫав вӑхӑтрах, ответлӑха туйса ӗҫлеменнине пула, Чебторг кирлӗ чухлӗ пахча-ҫимӗҫсем туса илеймен тата пахча-ҫимӗҫсене пӑсса пӗтернӗ. Малтанлӑха шута илнӗ тӑрӑх, пахча-ҫимӗҫсене ҫӗртсе пӗтерни пирки Чебторг 200 пин тенкӗ чухлӗ тӑкак тӳснӗ. Чебторгпа столовӑйсен трестӗ районсенче продуктсем хатӗрлес ӗҫе те ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ.

Суту-илӳ организацийӗсем хӑйсене паракан фондсемпе те пӗтӗмӗшпех усӑ курмаҫҫӗ. Ҫапла ӗҫсыннисене пама тивӗҫлӗ аш-какая, сахӑра тата ытти хӑшпӗр таварсене пӗтӗмпех илсе пӗтермен. Чебторг ҫӗленӗ тата ҫыхнӑ япаласемпе атӑ-пушмаксене те пӗтӗмпех илсе пӗтермен. Чебторг ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫленӗ пирки, краҫҫин илмелли фондпа та пӗтӗмпех усӑ курман, тӑвар сутас ӗҫе кирлӗ пек йӗркелемен.

Таварсене вӑрлассине салатса ярассине те пӗтермен-ха. Контроль ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелемен. Тавар илекенсене тӗрӗс мар турттарса панисем те е тӗрӗс мар укҫа шутласа панисем те пулаҫҫӗ. Столовӑйсенче хӑшпӗр чухне хаксене ӳстереҫҫӗ. Ҫапла вара ӗҫсыннисенчен ытлашши укҫа тенкӗ илеҫҫӗ.

Хӑшпӗр магазинсенче тӗрӗслемен тарасемпе усӑ кураҫҫӗ. Жалоба памалли кӗнекесем суту-илӳ тӑвакан пур организацисенче те ҫук-ха. Ку ӗнтӗ ҫитменлӗхсемпе кӗрешме чӑрмантарать.

Киселев докладӗ тӑрӑх пренире нумай юлташсем тухса каларӗҫ.

Депутат Львова юлташ 4-мӗш номерлӗ столовӑйра контроль ӗҫне мӗнле йӗркелени ҫинчен каласа пачӗ тата столовӑйсемпе магазинсен ӗҫне вӑйлатма сӗнчӗ. Депутат Никифоров юлташ 9-мӗш номерлӗ магазин ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен каласа пачӗ. ОРС начальникӗ Каплин юлташ суту-илӳ организацийӗсем, предприятисен айӑпӗпе, фондпа уйӑрса паракан таварсене кирлӗ чухлӗ илсе тӑманни ҫинчен каларӗ. Депутат Федорова юлташ Чебторг руководителӗсене критиклерӗ. Депутат Золотников юлташ магазинсенче таварсене паллакансене ытларах пани ҫинчен каларӗ суту-илӳ ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхе пӗтерме кирлине палӑртрӗ. Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ Братчиков юлташ хула Совечӗн исполкомӗ енчен суту-илӳ организацийӗсене ытларах пулӑшма кирли, совет организацийӗсем вӗсен ӗҫне ытларах хутшӑнса ӗҫлеме кирли ҫинчен каларӗ. Асӑннӑ юлташсемсӗр пуҫне прение депутат Михайлова, депутат Плетнев, Трофимов, Смирнова, Фридман, депутат Зимин тата Чеботорг директорӗ Швец юлташсем тухса каларӗҫ.

Сесси, суту-илӳ организацийӗсемпе столовӑйсен ӗҫне лайӑхлатмалли мероприятисене палӑртса, решени йышӑнчӗ.

Сесси хула Совечӗн исполком председателӗн заместителӗ — ҫар ҫыннисен ҫемьисене государство енчен пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделӑн заведующийӗ пулса ӗҫлеме Е. Г. Тарасова юлташа суйларӗ.

БЕЛОРУССИ КОЛХОЗӖСЕМ ЯЛХУҪАЛӐХ МАШИНИСЕМ ТУЯНАҪҪӖ

Нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем, Хӗрлӗ Ҫар вирлӗн ҫапнипе каялла чакнӑ чухне, Белоруссин колхозӗсен ялхуҫалӑх машинисен пысӑк пайне турттарса кайнӑ е пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫӗнӗ инвентарь туянас тӗлӗшпе Совет правительстви республикӑри колхозсене пысӑк пулӑшу парать. Ялхуҫалӑх машинисем тӑвакан заводсенчен унта 10.000 плуг, тырӑ вырмалли машинӑсем, сортировкӑсем, утӑ ҫулмалли тата ытти машинӑсем килсе ҫитнӗ. (ТАСС).

Ӳкерчӗк ҫинче: пирӗн чаплӑ земляк—Совет Союзӗн Геройӗ Илья Григорьевич Мешаков. Вӑл Муркаш районӗнчи Пӑсӑрман ялӗнче ҫуралса ӳснӗ.

ХУДОЖЕСТВӐЛЛӐ ПУЛТАРУЛӐХ ХОРӖСЕМПЕ ВОКАЛИСТСЕН СМОТРӖ

ВЦСПС-па СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен [illegible] йышӑннӑ тӑрӑх, 1944 ҫулхи декабрӗн 9-мӗшӗнчен пуҫласа 1945 ҫулхи апрель уйӑхне ҫити вӑхӑтра художествӑллӑ пултарулӑх хорӗсен тата вокалистсен Пӗтӗм Союзри смотрӗ пулса иртет. Ҫак ӑмӑртӑва Шупашкар хулинче организацилесе ирттерме комисси тунӑ.

Ҫак комисси смотра хатӗрленсе ирттермелли сроксене палӑртнӑ. Декабрӗн 15-мӗшӗпе январӗн 15-мӗшӗ хушшинче смотра ирттерме хатӗрленмелле. Январӗн 15-мӗшӗпе февралӗн 15-мӗшӗ хушшинче фабрикӑсенче, заводсенче тата учрежденисенче смотрсем пулса иртмелле. Февралӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа мартӑн 1-мӗшӗччен хулари смотр пулса иртет.

Смотра хатӗрленме кашни фабрикӑра, заводра тата учрежденире комисси тумалла.

Ҫак кунсенче смотра хатӗрленсе ирттерес тӗлӗшпе профсоюз комитечӗсен председателӗсен, комсомол организаци секретарӗсен канашлӑвӗ пулса иртет. Вӗсем вара смотра хатӗрленес ӗҫе пуҫарса ертсе пыракансем пулмалла.

Иртнӗ ҫул ирттернӗ смотр ку ӗҫе профсоюзсен хӑшпӗр организацийӗсем ҫителӗклӗ хакламаннине кӑтартса пачӗ. Ҫакӑ вӑл кӑҫал пулмалла мар.

Пирӗн республикӑри искусство работникӗсем смотр ӗҫсыннисен художествӑллӑ пултарулӑхне хӑпартас тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Ҫавӑнпа нумай предприятисемпе учрежденисенче художествӑллӑ кружоксене пулӑшса ертсе пыма опытлӑ руководительсем уйӑрса панӑ. Филармони 8 специалиста, музыка училищипе Радиокомитет икшер ҫын уйӑрса панӑ.

Смотра хатӗрленнӗ вӑхӑтра ҫӗнӗ хорсем организацилемелле, вӗсенче ҫӗнӗ юрӑсем вӗренсе, смотрта малти вырӑна тухма тӑрӑшмалла.

Композитор **Ф. ЛУКИН.**

СССР-ти Медицина наукисен академийӗн пӗррешмӗ сессийӗ

Декабрӗн 20-мӗшӗнче Мускавра СССР-ти Медицина наукисен академийӗн пӗррешмӗ сессийӗ уҫӑлнӑ. СССР-ти Медицина наукисен академийӗн оргбюро председателӗ—СССР Сывлӑх Халӑх Комиссарӗ Митерев юлташ хӑйӗн докладӗнче пирӗн ҫӗршывра медицина мӗнле аталанса пыни ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ.

Сессин пӗррешмӗ кунӗнче ҫавӑн пекех А. И. Абрикосов, Л. А. Орбели тата С. С. Юдин академиксем сӑмах тухса каланӑ. Хӑйсен сӑмахӗнче вӗсем патологи анатомийӗн, физиологин тата хирургин хальхи ыйтӑвӗсем ҫинче чарӑнса тӑнӑ.

* * *

Декабрӗн 21-мӗшӗнче СССР-ти Медицина наукисен академийӗн сессийӗн ирхи ларӑвӗнче академи отделенийӗсен—медицинӑпа биологи наукисен, гигиена, микробиологипе эпидемиологи тата клиника медицини отделенийӗсен—ларӑвӗсем пулса иртнӗ. Вӑл ларусенче отделени секретарӗсемпе бюро членӗсене суйланӑ.

Каҫхи ларура академик-секретарьсене тата отделени бюровӗсене, ҫавӑн пекех тата наукӑпа тӗпчев институчӗсен директорӗсене ҫирӗплетнӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн вара Медицина наукисен академийӗн президиумне тата академи президентне суйланӑ. Вӑрттӑн сасӑлапа хыҫҫӑн СССР-ти Медицина наукисен академийӗн президенчӗ пулма Н. Н. Бурденко академика суйланӑ. Медицина наукисен академийӗн вице-президенчӗсем пулма А. И. Абрикосов, М. С. Малиновский, П. А. Куприянов академиксене, Медицина наукисен академийӗн секретарӗ пулма В. В. Парин академика суйланӑ. Медицина наукисен академийӗн президиумӗн членӗсем пулма А. А. Богомолец, И. В. Давыдовский, Ю. Ю. Джанелидзе тата Л. А. Орбели академиксене суйланӑ.

Лару вӗҫӗнче, В. В. Парин академик докладӗ тӑрӑх, Медицина наукисен академийӗн членӗсене тата член-корреспондентсене хушса суйлас ыйтӑва тата академи хисеплӗ членӗсене суйлас ыйтӑва сӳтсе явнӑ. (ТАСС).

ГИМНАСТИКА ТЕЛӖШӖНЧЕН СССР-та КАМ МАЛТА ТӐНИНЕ ПАЛӐРТАССИ

Декабрӗн 21-мӗшӗнче Мускавра гимнастика енӗпе малта тӑракана палӑртас тӗлӗшпе ӑмӑрту пуҫланнӑ. Совет Союзӗн 1944 ҫулхи абсолютнӑй чемпионӗ ятне илессишӗн Мускаври, Тбилисири, Киеври тата ытти хуласенчи 32 гимнаст ӑмӑртаҫҫӗ. Ӑмӑртӑва хутшӑннисем хушшинче 1943 ҫулхи абсолютнӑй чемпионсем—Николай Серый тата Галина Урбанович, ҫӗршывӑн тата спорт обществисен чемпионӗсем— Беляков, Лаврущенко, Такайшвили, Дожорджадзе, Касьяник, Бокова, Сазонова, Каменская т. ыт. те.

Кӑҫалхи ӑмӑртӑвӑн программи, йывӑрлӑхӗ енчен илсен, пӗтӗм тӗнчери ӑмӑрту программисенчен кая мар. Ӑмӑртура гимнастикӑллӑ шестиборье текен упражнени сем: гимнастика тӗлӗшпе обязательнӑй йӗркепе тӑвакан тата ирӗклӗ упражненисем пулмалла. Ӑмӑртӑва хутшӑнакан кашни ҫын хӑй килӗштернӗ упражненисене кӑтартма пултарать.

Ӑмӑрту 4 кун пырать. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 21-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 21-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Чехословакире ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре малалла тапӑнса пынӑ, РИМАВСКА СОБОТА хулипе чугун ҫул узелне тата ФЕЛЕДИНЦЕ (ФЕЛЕЦ) хулипе узловой чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ТОМАШЕВЦЕ, БАКТИ, ТОМАШОВА, СЕПБОКОР, ЛИУКВА, ГОДЕЙОВ, ГОРТВА, ШИРКОВЦЕ ялӗсем тата АПАТИ, ГОДЕЙОВ чугун ҫул станцийӗсем.

Венгрире пирӗн ҫарсем ДЬЕНДЬЕШ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшманпа хытӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн сӑртлӑ-вӑрманлӑ района ҫӗнтерсе илнӗ, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ОЗД хулипе чугун ҫул станцийӗ, ХАМГОНЬ, ГОДОШЧЕЛАНЬ, ОМАНЬ, ЧЕРНЕЛЬ, БЕЛАПАТФАЛВА, МИКОФАЛВА, БЕКЕЛЬЦЕ, СУЧ, ТАРНАЛЕЛЕС, БЮКСЕК, ТЕРПЭШ, САЙЛА, РЕЧК, МАТРАДЭРЭЧКЭ, ПАРАД, БОДОНЬ, МАКТРАМИРДСЭНТ, НЕМТИ, МАЦЕНКА, НАДЬ-БАТОНЬ ятлӑ пысӑк ялсем тата СИЛВАШВАРАД, БЕЛАПАТФАЛВА, САРВАШКЕ, ПАРАД, НАДЬ-БАТОНЬ чугун ҫул станцийӗсем.

Декабрӗн 20-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапҫусенче ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре тата ДЬЕНДЬЕШ хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 1.490 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Декабрӗн 20-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 29 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 27 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире, Лученец хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем, малалла куҫса пынӑ. Тыткӑна лекнисем каласа пачӗ тӑрӑх, нимӗҫсен командованийӗ хӑйӗн ҫарӗсене совет ҫарӗсен наступленине тем пулсан та чарса лартма приказ панӑ. Тӑшман хӑйӗн унти лӳчӗркенӗ чаҫӗсене танксем парса тата вӑл участока йӗлтӗрлӗ егерсен дивизине илсе пырса вӑйлатнӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, Римавска Собота хули урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Хула урамӗсенче ҫӗрӗпех вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ. Паян пирӗн ҫарсем Римавска Собота хулине — ҫулсен узелне тата тӑшман оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне—туртса илнӗ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, совет боецӗсем 10 километр малалла кайнӑ та Лученец хулинчен 18 километр хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Лиуква ялне туртса илнӗ. Советсен ытти чаҫӗсем тӑшманӑн икӗ батальонне пуҫӗпех ҫапса ҫӗмӗрнӗ те халӑх пурӑнакан чылай пунктсене туртса илнӗ, вӑл шутра—Фелединце (Фелед) хулине йышӑннӑ. Трофейсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Венгрире, Дьендьеш хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Тӑшман Матра тӑвӗсем ҫинче тӗреклетнӗ пунктсем нумай туса тултарнӑ, вӑл ҫав участокра совет чаҫӗсене нумайччен тытса тӑма шутланӑ. Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн хирӗҫ тӑмалли узелӗсене нумайӗшне аркатса тӑкнӑ та сӑртлӑ-вӑрманлӑ аслӑ района ҫӗнтерсе илнӗ. Халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра Озд хулине тытса илнӗ. Ҫав районри ҫапӑҫусенче нимӗҫсем ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ. Пӗр чаҫри боецсем пӗр участокра кӑна 400 гитлеровеца ҫити вӗлерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн 2 артиллери тата минометсен 3 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 4 тупӑ, 11 миномет (вӗсенчен виҫҫӗшӗ улттӑ кӗпҫеллисем), 25 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пирӗн малти подразделенисем, тупӑсемпе, пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе, тӑшманӑн разведка тума хӑтланнӑ темиҫе отрядне сапаласа янӑ. Совет бомбардировщикӗсемпе штурмовикӗсем нимӗҫсен ҫулйӗрӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Ҫапла, пирӗн авиаци тӑшманӑн 8 паровозӗпе 40 вагонне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, унсӑр пуҫне, тӑшманӑн икӗ чугун ҫул эшелонӗпе икӗ горючи складне вут тӗртсе янӑ. Чылай вырӑнсенче, бомбӑсем тӳрех пырса лекнипе чугун ҫулсем ишӗлнӗ.

* * *

Остроленка хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсен отрячӗ пирӗн боевой охраненине атакӑланӑ. Совет боецӗсем тӑшмана ҫывӑхах янӑ та пулеметсемпе, автоматсемпе тата винтовкӑсемпе пеме тытӑннӑ. Гитлеровецсем каялла ҫаврӑнса чакма тытӑннӑ, анчах та вӗсен ҫулне пирӗн артиллери вут-хӗмӗ пӳлсе лартнӑ. Тӑшман отрядне вара пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Пирӗн летчиксем Пасельск чугун ҫул станцийӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан темиҫе вагона ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Станци территорийӗнче вӑйлӑ взрыв пулнӑ.

* * *

Нимӗҫ командованийӗ хӑйӗн Балтика тӑрӑхӗнчи Тукумс хулипе Либава хули хушшинчи районра ҫавӑрса илнӗ ҫарӗсем патне ҫаплах ҫӗнӗ вӑйсем иле-иле пырать. Тыткӑна илнӗ нимӗҫ офицерӗсем каласа панӑ тӑрӑх, юлашки вӑхӑтра Балтика тӑрӑхне Германирен 30.000 ҫынна ҫити илсе пынӑ. Нимӗҫ командованийӗ, хӑйӗн салтакӗсене шанчӑксӑр ӗҫшӗн ҫапӑҫтарасшӑн тӑрӑшса, тем те тӑвать.

Нимӗҫсен 205-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 358-мӗш полкӗн 5-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ обер-фельдфебель Отто Майер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Мана авиацирен пехотӑна куҫарчӗҫ, вара маршевӑй батальонпа пӗрле Балтика тӑрӑхне ячӗҫ. 205-мӗш дивизие ҫитсен, пире Билер полковник сӑмах тухса каларӗ. Унӑн сӑмахӗ ҫапла пулчӗ: «Часах эпир сире малти позицие яратпӑр. Сирӗнтен никам та тарма ан пултартӑр. Пӗлсех тӑрӑр, пирӗн лайӑх та хӑвӑрт ӗҫлекен хирти ҫар сучӗсем пур. Ҫапла ӗнтӗ, лайӑххах пӑхса тӑрӑр», терӗ. Ҫакӑн пек кӗтсе илни пире тӗлӗнтерсе, хӑратса ячӗ. Салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗсем унсӑрӑн та питӗ начарччӗ. Полковник ҫапла хӑратнӑ хыҫҫӑн пирӗн алӑсем тата ытларах усӑнса анчӗҫ».

Нимӗҫсен 215-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 435-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ 1-мӗш рота командирӗ Вильгельм Дойшле лейтенант ҫапла каласа панӑ: «Шернер генерал приказ кӑларнӑ. Ҫав приказ тӑрӑх, Балтика тӑрӑхӗнчи нимӗҫ ҫарӗсен ларутӑрӑвӗ шанчӑксӑр тесе калакан кашни салтака е офицера персе пӑрахмалла».

Резерври батальонӑн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ фельдфебель Ганс Исахим ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ пулӑшма янӑ вӑйсемпе пӗрле Балтика тӑрӑхне нумай пулмасть ҫитрӗм. Батальон командирӗ пире ҫапла каларӗ: «Тарнӑшӑн тата вырӑссем патне тарса каҫма тӑнӑшӑн эпир персе пӑрахатпӑр. Сирӗн хӑвӑрӑн кӑна мар асап тӳсмелле пулӗ, сирӗн ҫемьӗрсене те асаплантарӗҫ». Батальон командирӗн сӑмахӗсем Балтика тӑрӑхӗнче ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ ҫарӗсен пӗтес кунҫулӗ ҫывхарса килнине тата та ытларах ӗнентерчӗҫ. Пурте ҫакна ӑнланса илтӗмӗр: кунти вырӑнта лекнӗскерсем, эпир тек сӑлӑнса тухайрас ҫук».

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА КĔТСЕ ИЛЕР!

Çуракине сăмахпа мар, ĕçпе хатĕрленмелле

СЕНТЕРВАРРИ. Районри чылай колхозсем çуракине хĕрсех хатĕрленме тытăнчĕç. «Çĕнĕ ял», «Красная Армия», «Новая заря», «Восток», «1-ое Мая» колхозсем вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывса çитерчĕ тата вĕсене сортласа та хунă. Вăрлăхлăх тырăсен пахалăхне тĕрĕслеме лабораторие леççе панă. Çак колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсас тата уя тислĕк кăларас ĕçсем те ăнăçлăн пыраççĕ.

Анчах уйрăм колхозсем çуракине çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Акă, тĕслĕхрен, Упакасси ял Советне кĕрекен «Малалла» колхозăн 50 центнер тĕштырă вăрлăхĕ, 110 центнер çĕрулми вăрлăхĕ, Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн 18 центнер тĕштырă вăрлăхĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхозăн 70 центнер тĕштырă вăрлăхĕ, 220 центнер çĕрулми вăрлăхĕ çитмест. Ку колхозсенче вăрлăхлăх хывнă тырăсене сортлама тытăнман. Çавăн пекех «Большевик», «Моряк», Чкалов ячĕпе тата Урицкий ячĕпе тăракан колхозсенче паянхи куна çитсе те ялхуçалăх машинисене юсама тытăнман. Ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе уйрăмах Чкалов ячĕпе тăракан колхозра çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кунта 4-мĕш бригадăра (бригадирĕ К. Малышева) плугсемпе сÿресене уйран та пуçтарса кĕртмен. Çакăн çинчен Малышева юлташ пĕлет.—Çуракине тухиччен пухăпăр та юсаса та ĕлкĕрĕпĕр,—тесе лăпланса ларать вăл.

Çураки çывхарса килет. Вăл Малышева пек çаврăнăçусăр бригадирсене тата колхозăн тимсĕр руководителĕсене кĕтсе тăмасть.

И. ОСИПОВ.

Вăрлăхлăх тырă хывасси—паян тумалли ĕç

Первомайски районри «Смычка», «КИМ», «Большевик», «Авангард», Чапаев ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çуракинче кирлĕ вăрлăхсене çителĕклĕ таран уйăрса хунă, сортлама та тытăннă.

Анчах вăрлăх хывасси пур колхозсенче те лайăх пырать теме çук-ха. Сталин ячĕпе тăракан колхозра вăрлăхсене пурĕ те 12,8 процент, Литвинов ячĕпе тăракан колхозра 16 процент çеç хывнă. Вăрлăхсене сортлама çак вăхăта çитсе те пуçăнман. Вăрлăх хывас ĕçре «Путь Ленина» колхоз та чăтма çук начар ĕçлет.

Çак колхозсемех иртнĕ çуракинче, вăрлăх çителĕклĕ пулман пирки, акана вăхăтра ирттереймерĕç, çавна пулах тухăçлă тырпул туса илеймерĕç. Иртнĕ çулхи йăнăша кăçал тумалла мар. Çавăнпа та пур тĕрлĕ вăрлăхсене те çителĕклĕ таран уйăрса хурса сортлас пулать.

Н. ТАРАСОВ.

Уя тислĕк кăлараççĕ

КАЛИНИНО. Шинакассинчи «Броневик» колхозра витесенчен, ферма çурчĕсенчен кунсеренех 10-шар лав тислĕк кăлараççĕ. Тислĕке пухас тата уя кăларас тĕлĕшпе конюх И. Семенова, фермăра ĕçлекен Н. Никандрова тата Н. Нестерова юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Халиччен вĕсем 1400 лав тислĕк уя кăларнă.

Г. МАЛЬЦЕВ.

* * *

Йĕпреç районĕнчи «Правда» колхоз пахча-çимĕç акса çулран çул пысăк тупăш илет. Ф. Тарасов ертсе пыракан бригада çитес çул пысăк тупăш илессишĕн халех кĕрешме тытăннă. Пахча-çимĕç лартмалли вырăна тислĕк 100 лав ытла кăларнă, вĕсене пысăк купасем туса хунă. Парникпе кирлĕ хатĕрсене пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă.

М. ФОМИН.

Финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăх

Канаш районĕнче финанс ĕçне тивĕçлипе хакламаççĕ

Канаш районĕ 1944 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана пĕр кварталта та ăнăçлăн тултарайман. Тăваттăмĕш кварталти плана та декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 56,5 процент çеç тултарнă.

Апла пулин те, районри финанс отделĕ, перекет касси, страховани инспекцийĕ, çавăн пекех тата партипе совет организацийĕсем те укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăвăртлатассишĕн тăрăшмаççĕ. Вĕсем финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăхра та ĕç хăй тĕллĕнех лайăхланасса шанса тăнă. ВКП(б) Обкомĕн кăтартăвĕсене пурнăçламан. Çавăнпа ĕнтĕ декабрĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Сĕнтĕрвăрри районĕнче 850 пин тенкĕ, Елчĕк районĕнче 808 пин тенкĕ укçа пухнă пулсан, Канаш районĕнче пурĕ те 410 пин тенкĕ çеç пухнă.

Районри финанс отделĕнчи налогпа страховани инспекторĕсем налог агенчĕсене сахал пулăшаççĕ. Финанс пайĕн заведующийĕ Тарасова юлташ вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмасть. Çавна пула вара налог агенчĕсем те чылайĕшĕ начар ĕçлеççĕ. Ачча ялсоветĕнчи агент Прохорова, Вырăскас-Пикшик ялсоветĕнчи агент Иванова хăйсен планне тултараймаççĕ. Çапах та çав ялсовет исполкомĕсен председателĕсем агентсене пулăшмаççĕ. Вырăскас Пикшик ялсовет председателĕ Савельев хăй те парăмсене тÿлесе татман. Перекет кассин заведующийĕ Муравьева юлташ ялсенче пачах пулман. районри учрежденисемпе предприятисенче те сахал пулать.

Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ уйăхлăх вăхăтĕнче ялсене уполномоченнăйсем янă. Анчах та вĕсенчен чылайĕшĕсем хăйсене хушнă ĕçе пурнăçа кĕртмесĕрех 2—3 кунтанах каялла таврăннă. Хăшĕ-пĕрисем ялсене те кайман.

Çулталăк вĕçлениччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Халĕ ĕнтĕ мĕнле ĕçлемелли çинчен калаçса лармалла вăхăт мар, вăй-хăвата ÿстерсе ĕçлемелле. Финанс работникĕсем тимлĕн ĕçлесен, актива ĕçе анлăн явăçтарсан, партипе совет организацийĕсем вĕсене куллен пулăшса пырсан, финанс планне пĕтĕмпех тултарма пулать, тултармалла та.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолецсем хĕрÿ ĕçре

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Комсомолăн Çĕнĕ Ишмемесри Чапаев ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организацийĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Комсомолецсем колхозри ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне куллен тата лайăх туса пыраççĕ.

Комсомолец И. Тихонов уборка вăхăтĕнче машиновед пулса кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пычĕ. Кĕçал вăл 350 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрчĕ. В. Чеблуков комсомолец авăн çапнă çĕрте кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕ. кулленхи ĕç нормине 200 процент таран тултарса пычĕ. Комсомолецсем çамрăксене ĕçре хаваслантарса пынипе колхоз авăн çапассине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа туса пĕтерчĕ.

Колхозри массăллă ĕçе комсомолецсем хăйсем çине илчĕç. Ку ĕçе вĕсем колхоз клубне йĕркене кĕртнинчен тытăнчĕç. Клуба хĕле хатĕрлес тата тасатса йĕркене кĕртес тĕлĕшпе комсомолецсем воскресник туса ирттерчĕç. Халĕ колхоз клубĕ чăннипех те культура центрĕ пулса тăчĕ. Унта яланах çĕнĕ хаçат-журналсене вулама пулать. Дежурнăй комсомолец-агитаторсем клуба пыракан колхозниксемпе калаçусем ирттереççĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ăнлантарса параççĕ. Клуб çумĕнче тĕрлĕ кружоксем ĕçлеççĕ, вăл кружоксене комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Клубра кашни эрнере пĕрре колхоз çамрăкĕсен вечерĕ пулса иртет. Вăл вечерсенче эпир докладсемпе калаçусем ирттеретпĕр, ташă-вăййăсем те пулаççĕ. Клуб çумĕнчи драмкружок кăçал «Айдар», «Судра» тата ытти пьесăсене лартса панă. Драмкружок çывăхри ялсене те çÿрет, вĕсене унта лайăх кĕтсе илеççĕ.

Ф. Сидорова ертсе пыракан хор кружокĕ «Совет Союзĕн гимнĕ», «Конноармейская», «Сестра», «Катюша» тата ытти юрăсене те вĕреннĕ. Кружок кĕске вăхăтрах колхоз клубĕнче тата çывăхри ялсенче 8 хутчен концерт ирттерчĕ.

Комсомолецсем Сталин юлташ Октябрь революцийĕ 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа приказа тĕплĕн вĕренеççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем докладпа приказа колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлеççĕ. Ку ĕçе туса пыма кашни бригада çумне комсомолец-агитаторсене çирĕплетнĕ.

Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕсемпе хавасланнă колхозниксем фронта, тăван çĕршыва ытларах пулăшма тăрăшаççĕ. Хĕрлĕ Çар фондне вĕсем 150 пăт тырă, 25 центнер пахча-çимĕç пухса пачĕç. Халĕ комсомолецсем пуçарнипе колхозниксем чугун çул валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. 4-мĕш квартал планне 124 процент тултарнă.

Пирĕн колхоз районра лайăх ĕçлекенсенчен пĕри шутланать. Вăл ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне иккĕмĕш çул хăй аллинче тытса тăрать. Хальхи вăхăтра колхозра çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрÿ ĕçсем пыраççĕ. Вăрлăх фондне хывса çитернĕ, мĕнпур вăрлăха сортласа хунă. Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ. Ут хатĕрĕсене çак кунсенчех хатĕрлесе çитереççĕ. Сÿресене вĕрен-пăявсене юсаççĕ. Ку ĕçсенче комсомолецсем пуçарса ертсе пыраççĕ. Вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçре те комсомолецсем хастарлăн ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕ лайăх комсомолецсене партие ретне пама тăрăшать. Юлашки вăхăтра 3 комсомолец БКП(б) членĕн кандидатне кĕнĕ. А. Карпов—организацири хастарлă комсомолецсенчен пĕри. Вăл вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вулав çурчĕ районра лайăх ĕçлекенсенчен пĕри шутланать. Комсомолец Карпов юлташ партие ретне кĕме тивĕçлĕ тухчĕ.

Колхоз çамрăкĕсене комсомола явăçтарас тĕлĕшпе те эпир сахал мар ĕçлетпĕр. Союзра тăман çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕç туса пыратпăр, комсомолăн уçă пухăвĕсенче докладсемпе калаçусем ирттеретпĕр. Художествăллă пултарулăх кружокĕсем лайăх ĕçлени те пире колхоз çамрăкĕсемпе таччăн çыхăнса тăма пулăшать. Çак кунсенче кăна эпир колхоз производствинче малта пыракан 5 çамрăка комсомол ретне илтĕмĕр. П. Белов—колхозри примерлă конюх, вăл пăхакан лашасем яланах таса та мăнтăр. А. Сидоров—фермăра выльăх-чĕрлĕх пăхакан пулса ĕçлет, вăл та хăйĕн ĕçне юратать.

Партин пуçламĕш организацийĕ комсомол организацине куллен пулăшса, вĕрентсе пырать.

П. ТИХОНОВ,
Комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ.

ЕНИСЕЙ ÇИНЧЕ ÇĔНĔ ВЕРФЬ ТАВАÇÇĔ

Енисей çинче кимĕсем тăвакан верфь тума пуçланă. 1945 çулхи çуркуннеччченех çав верфьре 16 пысăк кимĕ тумалла. 1.650-шар тонна таякан 8 баржа тума пуçланă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТĂ ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ IV-МĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА 1944 ÇУЛХИ ДЕКАБРĔН 20-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: Хатĕрлес енĕпе
Куславкка	154,4	137,0	1	2
Сĕнтĕрвăрри	132,2	149,6	2	1
Первомайски	118,3	88,0	3	13
Комсомольски	115,8	78,1	4	19
Шупашкар	113,4	115,1	5	7
Чурачăк	112,5	100,2	6	11
Шăхасан	107,4	100,5	7	10
Йĕпреç	107,2	82,8	8	17
Октябрьски	105,7	107,0	9	8
Советски	95,6	86,3	10	16
Хĕрлĕ Чутай	91,2	105,6	11	9
Вăрнар	90,5	87,8	12	15
Муркаш	85,9	71,0	13	20
Вăрмар	85,9	56,1	14	24
Чкаловски	85,1	126,1	15	3
Калинино	84,3	125,4	16	4
Çĕмĕрле	84,0	124,0	17	5
Пăрачкав	84,0	120,0	18	6
Елчĕк	80,0	71,0	19	21
Красноармейски	79,5	91,6	20	12
Канаш	79,0	52,7	21	25
Ишлей	78,6	46,0	22	26
Çĕрпÿ	77,4	78,7	23	18
Етĕрне	73,8	64,0	24	23
Тăвай	70,8	67,5	25	22
Элĕк	59,4	44,1	26	27
Сĕнтĕр	59,2	43,7	27	28
Кувакино	57,0	88,0	28	14
* * *				
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	126,6	111,6	1	3
Кире вăрман хуçалăхĕ	113,4	73,8	2	12
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	112,5	100,2	3	5
Алтышево вăрман промхозĕ	108,8	82,0	4	8
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	107,4	100,5	5	4
Йĕпреç вăрман промхозĕ	95,6	91,2	6	7
Кире вăрман пункчĕ	95,0	92,5	7	6
Йĕпреç участокĕ	93,0	131,8	8	1
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	90,8	78,6	9	9
Вăрнар вăрман промхозĕ	88,6	114,5	10	2
Канаш вăрман промхозĕ	87,4	61,2	11	14
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	80,6	74,2	12	10
Буинск вăрман промхозĕ	79,4	73,9	13	11
Çĕмĕрле вăрман пункчĕ	64,7	61,3	14	13

Чугун çул транспорчĕ валли вутă

КУСЛАВККА. Комсомолăн «Спартак» колхозри пуçламĕш организацийĕ чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлеме ятарласа бригада организациленĕ. Çав бригада 11 кун хушшинче 300 кубометр вутă хатĕрлесе плана ытлашшипех тултарнă. Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçре малта пынăшăн комсомол организацине районри куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава панă.

Н. АНИСИМОВ.

Сĕтел-пукансем шыраса...

Кÿкеç ялповĕн Кÿкеçри столовăйне валли сĕтел-пукансем килнĕ пулнă. Ялпо председателĕ С. Яковлев юлташ сĕтел-пукансем шырама республика тăрăх тухса кайнă. Шырасан-шырасан, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи пĕр артельрен 30 пукан тупса килнĕ.

Шупашкар районĕнчи ялпосенче тата район центрĕнчи лавкасенче сĕтел-пукансем кăна мар, куллен кирлĕ ытти таварсене те пачах тупса илме çук.

Куллен кирлĕ таварсем (сĕтел-пукан, урапа-çуна, кÿршек-чÿлмек, çĕçĕ, хачă, пуртă тата ыттисене те) туса кăларма условисем çителĕклĕ. Районра 10 артель, райпромкомбинатпа апат-çимĕç комбиначĕ пур. Анчах та вĕсем начар ĕçлеççĕ. Иртнĕ 11 уйăхри плана 66 процент çеç пурнăçланă. Уйрăм артельсем — Паçпакри, Тĕкĕçри, Лапсарти, Чăрăшкассинчи артельсем—плана 35—40-шер процент çеç тултарнă.

Г. ПЕТРОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Тăшман наступлени пуçласа янă районра Германипе Бельги тата Германипе Люксембург хушшинчи чикĕрен хĕвеланăçнерехре çаплах çапăçусем пыраççĕ. Моншау хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксем хăйсен позицийĕсене каялла йышăннă, вĕсем унта Моншау хулине кĕрсе кайнă нимĕç чаçĕсене çавăрса илнĕ. Хĕвелтухăçĕнчен Мальмеди хули еннелле икĕ колоннăпа наступлени туса пыракан тăшман чаçĕсем Мальмеди хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Ставло хули патне тата Мальмеди хулинчен хĕвелтухăçнерехре ларакан Бюгенбах хули патне çитнĕ. Сен-Вит районĕнче наступлени туса пыракан тăшманăн тепĕр колонни пирĕн Сен-Витран хĕвелтухăçнерехри хăшпĕр чаçсене татса илнĕ. Халĕ тăшман Сен-Вит хулинчен икĕ мильăра тăрать.

Эхтернах районĕнче тăшман Консдорф патне çитнĕ. Эхтернах хулине çавăрса илнĕ. Ку фронтра тăшманăн 5—6 бронетанковăй дивизийĕ тата 8—9 пехотнăй дивизийĕ наступлени тăваççĕ. Моншау хулинчен çурçĕртерехре союзниксен Рур шывĕ тăрăх пыракан позицийĕсем Линних хулинчен пуçласа Дюрен хули патне çитиччен улшăнман.

Саар шывĕ улăхĕнче çапăçусем Диллинген хулипе Саарлаутерн хули районĕнче союзниксем тăшмана тапăнма тунă укрепленисем çинче пыраççĕ Сааргемюнд хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тăшманăн вăйлах мар икĕ контратакине сирсе янă. Битш хули çывăхĕнче Мажино линийĕн иккĕмĕш пысăк укреплениие Шиссек фортне тăшмантан тасатнă. Ку районран хĕвелтухăçнерехре тăшман наступлени пуçласа яма хăтланать, унăн темиçе патрулĕ Рейн шывĕ урлă каçнă.

Кольмар хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем кăштах малалла кайнă. Вогез тăвĕсен районĕнче тĕллĕн-тĕллĕн пулса иртнĕ çапăçусенче 800 нимĕçе ярăн тыткăна илнĕ.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче, çанталăк начар тăнă пирки, авиаци вăйлă çапăçма пултарайман.

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армири Канада чаçĕсем хăйсен Насильо каналĕ çинчи укрепленийĕсен районĕнче хаяррăн çапăçнă. Союзниксен чаçĕсем тăшманăн танксем пулăшнипе тунă темиçе пысăк контратакине сирсе янă. Фаэнца хули районĕнче 8-мĕш арми чаçĕсем Ламоне шывĕпе Сенно шывĕ хушшинче çурçĕрелле чылай кумай кайнă. 5-мĕш арми участокĕнче паллă улшăнусем пулман.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем истребительсем хÿтĕлесе пынипе, декабрĕн 20-мĕшĕнче Германири, Чехословакири тата Австрири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем ултă кун хушшинче кашни кун тăшманăн Германири, Чехословакири тата Австрири стратегиллĕ объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Декабрĕн 20-мĕшĕнче Пльзен (Чехословаки), Регенсбург (Германи) хулисенчи çар заводĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Австрири Линц, Зальцбург тата Филлах хулисене тапăннă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕн главнокомандующийĕ Икер генерал американецсен 15-мĕш авиаци корпусне саламлă телеграмма янă. Çав телеграммăра Икер генерал çапла каланă: юлашки ултă кун хушшинче Италири базăсем çинчен кунсерен пиншер самолета ярăн вĕçсе кайса, тăшмана тапăннă. Чехословакири, Турш Силезири, Польшăри тата Австрири нефтьрен урăх продуктсем тăвакан предприятисене питĕ вăйлă тапăннă.

Францин консультаци ассамблейинче тулашри политика çинчен сÿтсе-явнă

ПАРИЖ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС) Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Люксембург дворецĕнче Францин консультаци ассамблейин ларăвĕнче тулашри политикăна сÿтсе-явнă. Ассамблея ларăвĕнче де Голль генерал тата Францин правительствин членĕсем пулнă. Чи малтан ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Жорж Бидо сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Францин СССР-па союзлă пулассин тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен калакан договора мĕншĕн туни çинчен тата Мускаври калаçусем мĕнле условире пулса иртни çинчен каласа панă.

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо, Франципе Совет Союзĕ хушшинчи «договор пирки Францин консультаци ассамблейинче прениесем пуçласа, çапла каланă: «Германие никама çинчен тума пултарайми туса хурсан тин Европăра мир пулма пултарать». Франципе Совет Союзĕ хушшинчи договор, тенĕ Бидо, пĕр-пĕрне «хăвăрт, часах, тĕплĕн» пулăшмалли договор пулса тăрать. «Пирĕн союзниксем те, эпир хамăр та Америкăпа Англирен пăрăнасшăн мар. Франци те, Совет Союзĕ те США-па Англисĕр пуçне нимĕнле блок тума та шутламаççĕ».

Германи çинчен каласа, Бидо çакна асăннă: «Эпир Германие кирек епле агресси тума та чарасшăн», тенĕ.

ФРАНЦИН КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕНЕ ПĂХАКАН КОМИССИЙĔН ЛАРĂВĔ

ПАРИЖ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер консультаци ассамблейин ют çĕршыв ĕçĕсене пăхакан комиссийĕ ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн Жорж Бидон докладне итленĕ. Хăйĕн докладĕнче Бидо Францин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхĕ де Голль тата Бидо хăй Сталин Маршалпа тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе Молотовпа калаçни çинчен пĕлтернĕ. Вăл калаçу икĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор тунипе вĕçленнĕ. Пăхса тухнă ыйтусене сÿтсе-явнă чухне икĕ енĕ те пĕр-пĕрне лайăх ăнланни палăрчĕ, тенĕ Бидо. Бидо каланă тăрăх, вĕсем Мускавра пулни икĕ çĕршыв хушшинчи туслăха тата вĕсем пĕр-пĕрне шанса тăрассине çирĕплетнĕ, пĕр-пĕрне ăнланма пулăшнă; пĕр-пĕрне ăнланни вăл тăшмана татăклăн çĕнтерме тата çирĕп мир тума кирлĕ.

Комисси членĕсем тĕрлĕ ыйтусем панă. Вăл ыйтусем çине ответлесе, Бидо договорăн хăшпĕр уйрăм статьясен пĕлтерĕшне çутатса панă. Комисси хăйĕн резолюцине ассамблейăра сÿтсе-явма тăратать.

ПОЛЬША ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ КОМИТЕТĔНЧЕН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУСА ХУМА ХУШАÇÇĔ

ЛЮБЛИН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Речь Посполита» хаçатра демократиллĕ парти организацийĕсен тата халăх пухăвĕсен йышлă резолюцийĕсене пичетлесе кăларнă. Вăл резолюцисенче Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх правительствине туса хума ыйтаççĕ.

ЛЮБЛИН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кроснăри нефть промыслинче ĕçлекен 5.000 рабочи Польша Халăхĕн Советне çыру çырса янă. Унта Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх правительствине туса хума ыйтнă. Çавăн пек çырусем тата Люблин воеводствинчи хресченсен съезчĕ, Ремвертов хули çыннисем тата ыттисем те янă.

Францири поляксен ирĕклĕх комитечĕн конгресĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 17-мĕшĕнче кунта Францири поляксен ирĕклĕх комитечĕн конгресĕ уçăлнă. Çав конгреса делегатсем 400.000 çынтан, урăхла каласан, Франципе пурăнакан поляксен питĕ пысăк пайĕнчен пынă. Конгреса Францири мĕн пур департаментсенчен 700 делегат пынă.

Конгреса пынисем пурте Польшăн Люблинри Ирĕклĕх Комитетне пĕр иккĕленмесĕр йышăнаççĕ. Съездра тухса калакан ораторсем çав Комитетран Польша республикин Вăхăтлăх правительствине туса хурасси çинчен асăнсанах, залра хытă аллă çупнă тата «Люблинри Польша правительстви сывă пултăр!» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕннĕ.

Съездра Францин политикăллă хăшпĕр деятелĕсем сăмах тухса каланă.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи самолечĕсем паян Афины çинче вĕçсе çÿренĕ. Вĕсем ЭЛАС çарĕсен артиллери ĕçне сăнанă. Акăлчансем Греци столицин виçĕ пайĕнчен пĕр пайне партизансенчен тасатнă.

НАЦИЛЛĔ ĔÇ СОВЕЧĔ ЛЕЙБОРИСТСЕН ПАРТИЙĔН ГРЕЦИ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ РЕЗОЛЮЦИНЕ ЫРЛАНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Нациллĕ ĕç совечĕ лейбористсен партийĕн конференцийĕнче йышăннă резолюцие пĕр саслăн ырланă. Вăл резолюцире Англи правительствине Грецире перемири тума тата çывăхри вăхăтрах унта ирĕклĕ суйлавсем туса ирттерме ирĕк пама чĕннĕ. Нациллĕ ĕç советне Британири тредъюнионсен конгресĕ, кооператив союзĕ тата лейбористсен партийĕ кĕрет.

БОЛГАРИН ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИ ПАНĂ ОПРОВЕРЖЕНИ

СОФИЯ, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин телеграф агентстви хăйне çакăн пек калама полномочи пани çинчен пĕлтерет: «Болгари çарĕ Афины хулинче тата Грецин ытти вырăнĕсенче пыракан çапăçва хутшăннă тесе пĕлтерни тата Болгари çарĕсем Греци çĕрне тĕрлĕ политикăллă юхăмсене пулăшас шутпа кĕнĕ тесĕ пĕлтерни—суя хыпар».

ГЕРМАНИРЕ ÇЫНСЕНЕ ВĔЛЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла «Лаге» хаçат Германин «юстици» министрĕн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра Германире çынсене ытларах та ытларах вĕлерсе пыни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Гитлерла министр хăй калаcа панă тăрăх, çынсене вĕлерни çапла ÿссе пынă: 1941 çулта Германире 2.921 çынна вĕлернĕ пулсан, 1943 çулта — 5.360 çынна вĕлернĕ. Вĕсенчен нумайĕшне гитлеровецсем государство интересне сутнăшăн, вăрçăпа хуçалăх распоряженийĕсене пăснăшăн тата çар закунĕсене пăхăнманшăн вĕлернĕ.

ГИТЛЕРА ÇĔНĔРЕН ВĔЛЕРМЕ ТĂНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ХЫПАРСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Швецири «Афтонбладет» хаçат пĕлтернине парать. Çав пĕлтерÿре Берлинра Гитлера татах вĕлерме тăни çинчен хыпарсем сарăлнă, тенĕ. Вăл хыпарсем Плесхейм (Бавари) замокĕнче пулнă пушарпа çыхăнса тăраççĕ. Вăл замокра Гитлерăн штаб-хваттерĕ пулнă пуль, тенĕ, унта вăл пĕр вăхăт хушши пурăннă. Плесхейм районне пĕтĕмпех СС чаçĕсем çавăрса илнĕ, вăл районпа нимĕнле çыхăну та çук.

Шкулсенче вăрçă ĕçне вĕрентесси тата комсомолецсен задачисем

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ хушнă тăрăх, комсомол организацийĕсен шкулсенчи вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас, çамрăксене физкультурăпа çар ĕçне вĕрентес ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлемелле. Пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, комсомолăн пирĕн республикăри чылай организацийĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Комсомол организацисем, çутĕç органĕсемпе тата военкоматсемпе пĕрле, шкулсенче ĕçлеме вăрçă ĕçне лайăх пĕлекен тата юратакан военруксене уйăрса лартнă. Вăрçă ĕçне вĕренме кирлĕ хатĕрсене тупса парас тĕлĕшпе те комсомол организацисем сахал мар тăрăшрĕç. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче кăна комсомолецсем пуçарнипе 2.056 мăшăр йĕлтĕр, 2434 винтовка макечĕ, 7157 граната, тĕллемелли станоксем 245, кĕреçесем 450, Морзе азбукине вĕренмелли уçăсем 80, артоскопсем 156 туса хатĕрленĕ. Вăрçă ĕçне вĕренме 12 çĕрте кабинет тата 12 çĕрте тир уçнă.

Комсомол организацисем пуçарнипе республикăри нумай шкулсем çумĕнче физкультурăпа спорт площадкисем тунă. Вăрçă ĕçне вĕренессине лайăх йĕркеленĕ шкулсенче занятисем те ăнăçлăн иртеççĕ, оборона кружокĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Çавăн пек шкулсен шутне Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкула, çав районри Хоршевашри çичĕ çул вĕренмелли шкула, Кувакинăри вăтам шкула. Октябрьски районри Нарачаккинчи вăтам шкула тата Шупашкар хулинчи арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулне кĕртмелле.

Çав вăхăтрах вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлекен шкулсем те пур-ха. Первомайски, Шăмăршă, Куславкка, Канаш, Йĕпреç районĕсенчи шкулсенче вăрçă ĕçне вĕренмелли кабинетсене органицилес, спортпа вăрçă ĕçне вĕренмелли инвентарьсене туса хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Хăшпĕр шкулсенче военруксем çук. Кувакино районĕнче çичĕ çул вĕренмелли икĕ шкулта, Улатăр хулинчи ФЗО шкулĕнче военруксем çук.

Первомайски Шăмăршă, Етĕрне тата Канаш районĕсенче шкулсенче вăрçă ĕçне вĕрентме уйăрса панă укçапа сахал усă кураççĕ, вĕренÿре кирлĕ пособисене илмеççĕ.

Вăрçă ĕçне вĕрентессине, чи малтанах, ачасене дисциплинăллă пулма вĕрентнинчен пуçăнмалла. Анчах çакна Шăмăршă тата Етĕрне районĕсенчи хăшпĕр шкулсенче пачах курма çук. унта шкулсенче вĕренекенсем дисциплинăна пăхăнмаççĕ, шкула кая юлса çитеççĕ, ирхи физзарядкăна ирттермеççĕ. Шкул директорĕсем вăрçă ĕçне вĕренмелли уроксенче сайра пулаççĕ, ку предметпа ачасем мĕнле вĕренни пынипе интересленмеççĕ, военруксене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. Военрукăн шкул ачисене пур уроксенче те дисциплинăллă пулма, учитель хушнисене пĕр пăр. каланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма, шкулта та, шкул тулашĕнче те хăйсене йĕркеллĕ тытма вĕрентмелле. Çак ĕçре военруксене шкулти обществăллă организацисен, чи малтанах, комсомол организацин хастаррăн пулăшса пымалла.

Военрук вăл — вăрçă дисциплинине вĕрентекен, шкул тулашĕнчи физкультурăпа спорт ĕçне организацилекен çын кăна мар, çавăн пекех вăл шкул ачисен воспитателĕ. Çавăнпа та военруксен шкулти тĕрлĕ кружоксем организацилесе вĕсене ертсе пымалла. Шкул ачисене пирĕн тăван çĕршывăн пуян историйĕпе, чаплă полководецсен пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе тĕплĕн паллаштармалла. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсен Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи паттăр ĕçĕсен примерĕпе ачасене хăюллă та чăтамлă пулма вĕрентмелле.

Шкул ачисене вăрçă ĕçне вĕрентес ĕçе программа тăрăх уроксем ирттернипех ăнăçтăн пурнăçа кĕртме çук. Ку ĕçе куллен туса пымалла. Ачасене йĕлтĕрпе çÿреме, чупма, сикме, тăркăчпа чупма, тĕрлĕ чăрмавсене çĕнтерме, йывăрлăхсене чăтса ирттерме хăнăхтармалла Шăхасан, Шăмăршă, Вăрмар, Çĕрпÿ, Комсомольски тата Куславкка районĕсенчи шкулсенче физкультурăпа спорт ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ. Вăл районсенче шкул ачисем хушшинче БГТО значок нормисене парассине начар организациленĕ.

Тĕрлĕ ăмăртусем ирттерни—шкул ачисен вăрçă ĕçне вĕренес тĕлĕшпе илнĕ пĕлĕвне, физкультура енĕпе пухнă ăсталăхне, вĕсем çаврăнăçуллă тата чăтăмлă пулнине тĕрĕслеме пулăшать. Ачасем ăмăртура мала тухма хавхаланни ĕçе хăвăрт тата лайăх тума вĕрентет, мала тухмалли майсене хăнăхма пулăшать. Çавăнпа шкулсенче физкультурăпа спорт ăмăртăвĕсене ирттерес ĕçре комсомол организацисен лайăх ĕçлесе пымалла. Комсомолецсен вăрçă ĕçне вĕренес тĕлĕшре тата физкультурăпа спорт ĕçĕнче отличниксем пулса, пур çамрăксене те пример кăтартса пымалла, ку ĕçсене пуçарса ертсе пыракансем пулмалла. Комсомол—военрукăн помощникĕ, вăл военрук умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăça кĕртме пулăшмалла.

Партипе правительство шкулсенче вăрçă ĕçне вĕрентессине лайăхлатма пур условисене те туса пачĕç. Шкулсенчи военруксемпе комсомол оганизацисен çав условисемпе анлăн усă курмалла. Хĕрлĕ Çарăн пулас боецĕсене çирĕп сывлăхлă та хăюллă, чăтамлă пулма вĕрентсе ÿстермелле.

Г. ПЕТРУХИН.
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактаран — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, партн пурнăç пайĕн 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НГ 04279. Типография № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.